## *ЧĂВАШЛĂХ ТĔНЧИН ХАКЛĂ ПУРЛĂХĔ*

Акă ĕнтĕ эпир авалхи чăвашлăх тĕнчин алăкне уçса хамăрăн авалхи мифсемпе тата легендăсемпе паллашса вĕсем ытти халăхсенниичен пĕрре те кая маррине куртăмăр, вĕсен сăнарĕсене куç умĕнче ӳкерчĕклĕн курса савăнтăмăр.

Авалхи чăвашлăх тĕнчи, авалхи чăваш туррисем, авалхи чăваш паттăрĕсем - чăн-чăн ĕмĕрлĕх пурлăх. Халăх ăсĕ, халăх чунĕ, тавракурăмĕ, ĕмĕчĕ-шухăшĕ упранать вĕсенче.

Юхма Мишши çак чăвашлăх тĕнчине упракан пурлăха пĕр çĕре пуçтарса, наукăлла классификаци туса, çыравçă тата шухăшлавçă куçĕпе пăхса, кашни сăнара, авалхи паттăрсене хăйсене çеç тивĕçлĕ вырăна лартса, вĕсене пысăк пĕлтерĕш парса, хăйĕн çак кĕнекине вулакансене парнелерĕ, питĕ пысăк та сăваплă ĕç турĕ. Тӳрех калатпăр: ку кĕнеке - халăх ăслайĕ, пирĕн нацин чи паха пурлăхĕ. Юхма Мишши çав пурлăха пуçтарса, "Авалхи чăваш туррисемпе паттăрĕсем» (Авалхи чăваш тĕнчи) ятпа ылттăн çӳпçене хурса халăха каялла тавăрса панăшăн пирĕн пурин те тав тумалла.

Вулакан асăрхарĕ пулĕ пирĕн, чăвашсен те хăйне евĕрлĕ Олимп пулнă иккен. Ана Арамаçи тăвĕ тенĕ. Авалхи грексен туррисен пантеонĕ пуçĕнче Зевс тăнă. Чăваш туррисен пантеонĕ пуçĕнче тĕнче хуçи Танкăр тăнă. Юрату турри те, вăрçă турри те, шыв турри те, тасалăх турри те, пӳртçурта, килтерĕшне сыхлакан турă та, инкеке лекнĕ çынсене пулăшакан турă та, вăрмана пăхса тăракан турă та, ытти турăсемпе мифла сăнарсем те пулнă чăвашсен. Кашни турри хăй евĕрлĕ, вĕсен характерĕ те, тулашĕнчи сăн сăпачĕ те, шалти кăмăл-сисĕмĕ те, ĕçе хутшăнасси те хăйне евĕрлĕ. Вĕсенчен кашниех вулакан куçĕ умне чĕрĕ пек тухса тăраççĕ.. Анчах тĕрлĕ сăлтава пула эпир вĕсене манса пынă, кайран вара аса илме те пăрахнă. Анчах пирĕн вĕсене ман ма юрамасть. Вĕсене манни - чăвашлăха çухатни.

Кĕнекери "Çынсем - Çĕр-анне ачисем" ятлă пайра автор чăваш халăхĕ тĕнче, çынсем мĕнле пулса кайни çинчен илемлĕн, асра юлмалла ăнлантарса парать. Авалхи чăвашсем тĕнчери кашни пулăмах ăнлантарма, вĕсенче хăйне майлă илем, çынлăх, чун вĕçевĕ, тасалăх курма пĕлнĕ. Акă, Тӳпе мĕншĕн çӳле çĕкленнине е чĕкеç хӳри мĕншĕн йĕплине, е шаланкă шыв мĕнле тупнине, сăвăрсем мĕнле пулса кайнине вуланă май халăх философийĕ аслине, чăвашсем чăнласах'та авалхи халăх пулнине аван ăнланса илме пулать. Чăваш юмах-халапĕнче, мифĕсемпе преданийĕсенче халăхăн мĕн авалран пуçтарнă ăс-хакăлĕ, ĕмĕрсем хушшипи пуçтарăннă опычĕ те аванах курăнать.

Паллах, кашни чăваш сынни Киремет çинчен те, йĕрĕхсем çинчен те, усалсем çинчен те, ытти мифла сăнарсем (Тÿркĕлли, Вушни, Апас, Алпаста тата ытти те) çинчен те илтнĕ пулĕ. Анчах вĕсенчен кашнийĕ пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ши?.. Шăпах çак мифла сăнарсем çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарас тĕллев лартнă та ĕнтĕ çыравçă.

Авалхи грексен чаплă та вăйлă паттăрĕ Геракл, çынсене вут парнелекенĕ Прометей пулнă. Пирĕн те çавсем пекех вăйлă, пĕтĕм тĕнче тĕлĕнсе тăмалли мифла сăнарсем пулнă. Вĕсенчен чи чапли, чи паллиӗ паллах, Улăп. Вăл çынсене вут та тупса панă, чăваш халăхне вилĕмрен те çăлнă, ăна ĕмĕр-ĕмĕр телейлĕ тума ĕмĕтленнĕ... Тепĕр чаплă паттăр - Ламан. Ĕмĕр-ĕмĕр чăвашсене телей кÿме, пулăшма çуралнă пулпă вăл. Анчах ăна та, чăвашсене те ултав турри Суйкăн улталаса инкек кăтартнă. Ку философиллĕ пысăк, анлă сăнар. "Пурнăç вăл - кĕрешÿ, анчах пурнăçра ырри мар, ытларах чухне усалли çĕнтерет мĕн, çавăнпах ним хуйхăтертсĕр пурнăç тума питĕ хĕн", - ăнлантарать халăх философийĕ.

"Асанпа Пинеслу», "Сывлăмпипе Туканай мăрса", "Айсуйпа унăн ывăлĕ Асмук", "Ятмал - çĕрĕçлекен ачи" тата ытти авалхи халапсем хăйсен романтика вăйĕпе вулакана тĕлĕнтереççĕ. Мĕн тери таса юрату, ырра, пурнăç илемне, пуласлăха шанни ÿкерĕннĕ вĕсенче. Тупата турăшăн, вĕсенчен кашниех - опера та, балет та, илемлĕ фильм валли хатĕрленĕ сценари те. Пулĕç-ши хăçан та пулсассăн вĕсем тăрăх оперăсем, балетсем çыраканисем, кино ÿкерекенсем?!. Шанас килет, ĕненес килет. Шанчăкпа пурăнакан телейлĕ.

Кашни халăх мифологийĕн пуххи - çав халăх утса тухнă историлле çула хăйне майлă ăнлантарса пани. "Авалхи чăваш туррисемпе паттăрĕсем" кĕнекене вуланă май чăваш халăхĕ утса тухнă историлле çулăн сĕмне сăнама пулать. Пирĕн шутпа унта авалхи Элам та, авалхи Алтай тĕнчи те, авалхи чăваш ламтайĕсем Çурçĕр Кавказ таврашĕнче пурăнни те, каярахпа аслă Атăл тăрăхне килсе вырнаçни те пур. Хаклă вулаканăм, эсир тин çеç вуласа тухнă ытарайми кĕнекен кашни пайĕ, кашни сыпăкĕ, кашни страници шăпах çакна кăтартса парас туртăмпа тапса тăрать те ĕнтĕ.

2000.